# ПРЕДАНІЕ ЧУВАШЪ

ОБЪ ОСНОВАНІИ

# ГОРОДА КОНСТАНТИНОПОЛЯ.

Константин хулине туни çинҫен Ҫăваш ваттисем калаçни.

**О ПРИГОРОДѢ БИЛЯРСКѢ.**

Пӳлерти Валĕм-Хуçа çинҫен.

**На чувашскомъ языкѣ.**

*Н. И. П.*

КАЗАНЬ.
Центральная типографія.
1915.

# ПРЕДАНІЕ ЧУВАШЪ

ОБЪ ОСНОВАНІИ

# ГОРОДА КОНСТАНТИНОПОЛЯ.

---

Константин хулине туни çинҫен Ҫăваш ваттисем калаçни.

**О ПРИГОРОДѢ БИЛЯРСКѢ.**

Пӳлерти Валĕм-Хуçа çинҫен.

**На чувашскомъ языкѣ.**

*Н. И. П.*

КАЗАНЬ.
Центральная типографія.
1915.

## I.

1 Константин патша пыраҋ
Хура тинĕс хĕррипе
Клин-клин уткаласа
Хура çĕлен йĕррипе.
2 Хула тума вырăн пăхат
Икĕ Хура куçĕпе,
Пысăк шухшсем шухăшлаҋ
Миро сĕрнĕ пуçĕпе.
3 Тинĕс çинҫе çил вĕрет,
Тинĕсре хум çĕкленет,
Хура тинĕс ҫапĕпе
Патша шухăш çирĕпленет.
4 Тинĕс хумсем пыра-пыра
Çырансене çапаççĕ;
Патшан вăйлă шухăшпала
Йун тымарсем тапаççĕ.
5 Патша вырăн йуратса кайаҋ
Хура тинĕс хĕррине
Ҫаплă хула тумашкăн,
Иатне ĕмĕр хумашкăн.

6 Хӑйӗнпеле пӗр канашлӑ
Ҫыннисене те патша
Хай шухӑшне пӗлтерет
Кӑмӑљсене килтерет;
7 Пур ватсемпе тӳресемпе
Канашласа пӗтерсен
Сывлӑхпа пулӑшу ытаӗ
Патша ҫӳлти Турӑран;
8 Патша вара ҫын пуҫтараӗ
Хула вырӑн тасатма,
Пупсем тухаҫҫӗ турӑшсемпе
Кӗлӗ туса ӑсатма.
9 Ҫар халӑх пек ҫын пыраӗ
Хура тинӗс хӗррине
Хула вырӑн тикӗслеме
Кӑмӑл парса ӗҫлеме.
10 Патша ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ
Хула вырӑн тикӗслеҫҫӗ
Ывӑнмасӑр, канмасӑр
Ӗҫӗсене манмасӑр.
11 Хура тинӗс тӗлӗнђе
Хура пӗлӗтсем тухаҫҫӗ,
Ҫӑмӑр пулса ҫӑваҫҫӗ,
Ҫырма пулса йухаҫҫӗ.

12 Тырра-пулла ӳстерме
Ҫӑмӑрӗ те кирлӗ ҫав;
Патшасенӗн сӑмахсем
Ҫта пырсан та вирлӗ ҫав.
13 Тинӗссем те кирлӗ ҫавӑ
Ҫӗр ҫийӗнҫе нӳр тытма,
Кимсене те тӳр килет ҫав
Тинӗс ҫийӗнҫе путма.
14 Хура тинӗс таврашӗнҫе
Пур савӑнӑҫ пурте пур:
Пӗлӗт пекех вӗҫҫе ҫӳрет
Кайӑк квакал, кайӑк хур.
15 Ҫеҫекӗсен илемӗсем
Куҫа шартса йараҫҫӗ;
Тӗтрисемпе сывлӑмӗсем
Ҫас-ҫасах нӳр параҫҫӗ;
16 Тинӗс пекех хумханаҫҫӗ
Урписемпе туллисем,
Пӑтӑ пекех вӗреҫҫӗ
Хвел ӑшшинҫе пуллисем;
17 Шултӑрисем вӗттисене
Хыпа-хыпа ҫӑтаҫҫӗ,
Хумӗсем те хыт ҫапаҫҫӗ
Ҫырансем йепле ҫӑтаҫҫӗ.

18 Ç̆ĕрĕн-кӳнĕн ăйхă памасть̆
Хура тинĕс патшана.
Йепле пĕлсе пĕтермелле
Ку тĕнҫери хватçана?
19 Турра кĕл-туса выртать̆
Ыр тĕлĕксем курасшăн,
Пĕр пит ҫаплă хула туса
Йатне ĕмĕр хварасшăн.
20 Тинĕс хум пек шухăш çӳрет
Кçтентин патша пуçĕнҫе,
Пуç çĕклейми шухăш парать̆
Патшана та ку тĕнҫе.
21 Хăйĕн çывăх çыннисемпе
Лара-лара канашлать̆,
Шухăшĕсем нумай пирки
Ҫасран-ҫасах анаслать̆.
22 Ир те пулать̆, каç та пулать̆,
Патша çынсем ĕçлеççĕ
Йурла-йурла, шавла-шавла
Хула вырăн тикĕслеççĕ.
23 Саланаççĕ килсене
Тикĕслесе пĕтерсен,
Хула туса лартмалăх
Вырăн туса çитерсен.

24 Шаланкăсем ташлаççĕ,
Вăрманĕсем кашлаççĕ,
Хура тинĕс хĕррисем
Патша куçне аҫ̌ашлаççĕ.
25 Патшапала канаш тума
Пухăнаççĕ çенатсем,
Патша тавра лараççĕ
Хăйĕн савнă çунатсем.
26 Çунат çупса савăнса
Кайăкĕсем йурлаççĕ,
Илемлĕ сассисемпеле
Çут тĕнҫ̌ене ырăлаççĕ.
27 Патшасемпе çенатсем
Пĕрле канаш тăваççĕ,
Вăйĕсене пĕлесшĕн
Халăхсене сăваççĕ.
28 Акă патша хыпар йарать
Таçти-таçти çĕрсене,
Хура тинĕс хĕррине
Хула тума килмешкĕн.
29 Шаннă çынсене йарать
Ăста çынсем шырама,
Ҫ̌асрах пухăнма хушать
Ҫ̌аплă çуртсем пурама.

30 Мĕн пур хатĕр çитсессĕн,
Пур ăстасем пухăнсан,
Кайаҫ патша кайаллех
Хура тинĕс хĕррине.
31 Çар халăх пек халăхпа
Хула туса лартмашкăн,
Малтан хула вырăнне
Пысăк хĕрес тăратмашкăн.
32 Хула вырăнĕ патне
Çывăхара пуçласан,
Сехĕрленсе ӳкеççĕ
Пĕтĕм патша халăхĕ.
33 Вĕсем тасатса кайсан
Ту пысăкĕш хура çĕлен
Хура тинĕсрен тухса
Выртнă хула вырăнне.
34 Çĕлен тинĕсрен тухнине
Куракансем пулнă тет,
Тăвăл вăхăтĕнҫи пек
Пĕтĕм тинĕс шавласа,
Пакăлтатса пăлханса
Пăхма хрушă пулнă тет.
35 Акă çавă вахăтра
Икĕ пуçлă пĕр кайăк

Кӗмел пекех ҫутӑскер
Ҫӳлте, ҫӗлен тӗлӗнҫе,
Ҫӗлен ҫинелле пӑхса
Вӗҫҫе ҫӳрет ҫиҫӗм пек.
36 Ҫӗлен ҫӗтресе выртат
Ҫав кайӑкран хӑраса.
Кайӑк ҫаврӑнса ҫӳрет
Меллӗ вӑхӑт шыраса.
37 Вӗҫҫе анса ҫаклатать
Ҫӗрнисемпе ҫӗлене
Етем ҫунне хратакан
Усал тискер клилене.
38 Кайӑк ҫӗрни ыраттарнипе
Ҫӗлен ахӑрать шӑхӑрать,
Кайӑкпала ҫапӑҫма
Ҫӗпписене йӑхӑрать.
39 Амӑш патне пымашкӑн
Ҫӗпписем те хӑраҫҫӗ,
Тинӗс тӗпӗнҫе йӑвара
Хускалмасӑр тӑраҫҫӗ.
40 Кайӑк ҫӗрнисемпеле
Ҫӗлене ҫӗклет ҫӳлелле,
Ҫасах илсе ӑлӑхать
Ҫӳле, пӗлӗт ҫинелле.

41 Çĕлен хăпарас маршăн
Авкаланат̆, ђашкăрат̆,
Пĕтĕм çĕре ђĕтретет,
Çав-тĕр хытă кăшкăрат̆,
42 Тем пек авкалансан та
Кайăк йамаст̆ çĕлене,
Куçпа пăхса курăнми
Çӳле илсе ăлăхат̆.
43 Пăрахат̆ кайăк çĕлене
Вĕлересшĕн çĕр çине.
Патша çынсем тасатнă
Хула вырăнĕ çине.
44 Ӳкет çĕлен çĕр çине
Авкаланса, ахăрса,
Усалсенĕн пуçлăхĕ
Асамăç пек шăхăрса,
45 Çĕре ђĕтретсе йарат̆
Ытла хытă ӳкнипе,
Ӳт тирĕнђен йун йухат̆
Кайăк ђĕрни ђикнипе.
46 Акă çĕлен имкенет,
Авкаланат̆, пăрăнат̆,
Кайăк çĕлен тĕлĕнђе.
Йалтăртатса курăнат̆,

47 Пуҫне ҫӗклет ҫӳлелле,
Пӑхат̆ кайӑк ҫинелле.
Анђах хвађӗ ҫитес ҫук
Кайӑка тытса ҫимелле.
48 Кайӑк ҫӗлен тӗлӗнђе
Вӗҫҫе ҫӳрет ҫиҫӗм пек,
Хурђӑка пек йавӑнса
Ҫӗлене вӗлерме ӑвӑнса,
49 Вӗҫҫе ҫӳрет-ҫӳрет те,
Ҫӗлен ҫине анат̆ те
Икӗмеш хут ҫаклатат
Ђӗрнисемпе ҫӗлене.
50 Хватлӑ ђӗрнисемпеле
Татах илсе ӑлӑхат̆.
Питӗ ҫӳлӗ ҫӗлене
Витӗр куҫпа курӑнми.
51 Ђӗрнисене ӗҫерсе
Каллех прахат̆ ҫӗр ҫине,
Ҫӗлен лаплатса ӳкет
Вилме патнеллех ҫитет.
52 Кайӑк пӗр май йавӑнса
Ҫӳрет ҫӗлен тӗлӗнђе,
Ҫӗлене вӗлересшӗн,
Пӗтӗмпех пӗтересшӗн,

53 Анаҫ аҫа-ҫиҫём пек
Ҫёлен ҫине вашлатса,
Сехёрленсе хăраса
Ҫёлен вырта҄ ҫашлатса;
54 Ҫёрнисемпе ҫёлене
Виҫҫёмёш хут ҫаклата҄,
Ҫёлене ҫёклет ҫӳлелле,
Йунё ҫёре патлата҄.
55 Ҫёлен ахăра҄, ҫухăра҄
Ҫӳле хăпарас маршăн,
Анҫах ҫёлен вилмесёр
Кайăкё кайас маршăн.
56 Татах илсе ăлăха҄
Витёр куҫпа курăнми,
Каллех праха҄ ҫёр ҫине
Ёлёк ӳкнё йёр ҫине;
57 Вилет ҫёлен пётёмпех
Ниҫталла та шăваймас҄;
Тем пек пысăк пулсан та
Кайăка ним тăваймас҄.
58 Ҫут тёнҫере нихҫан та
Кун пек хрушă ёҫ курман
Патшасем те ҫынсем те,
Мен пур ҫёрё ҫунсем те

59 Ăна куçпа курса мар,
Çынсем калаçнипе те
Сехĕрленет çын ҫунĕ,
Сăрăлтатаӳ çан-çурăм.

60 Ку мĕне пĕлтерет? тесе
Патша питĕ хуйхăраӳ,
Пĕтĕм патшалăх такĕнҫен
Ăслă çынсем йăхăраӳ.

61 Ăслă çынсем пухăнаççĕ
Ҫасах патша ҫĕннипе,
Кала-кала параççĕ
Хăйсен патшине ҫăннипе.

62 Ăслă çынсен сăмахсене
Халъ çырăпăр малалла,
Шухăшласа пăхсассăн
Тĕлĕнтерсе йамалла.

63 Хура тинĕсрен тухса
Хула вырăнне выртнă
Ту пысăкĕш хура çлен
Акă мĕне пĕлтерет:

64 Хула туса пĕтерсен
Пайтах вăхăт иртсессĕн
Хула ҫапĕ сарăлĕ
Çĕрĕн вĕçĕ-хĕррине.

65 Хура вӑрман пек ҫарпа
Килӗҫ хулана трӗксем
Ҫавӑ ҫӗлен йунӗ пек
Йухтарӗҫ трӗкпе крексем.
66 Нумай вӑхӑт хулара
Трӗксем ыр курса пурӑнӗҫ.
Вӑл вӑхӑтра кӗрексем
Кайӑк пек пӗђӗк курӑнӗҫ.
67 Ҫутӑ кайӑк Христос,
Ун ҫыннисем нумайђђен
Йавӑнса ҫўрӗҫ кайӑк пек
Калле туртса илесшӗн
Тӗрӗксенђен хулана.
68 Именсе туса тӑрас мар,
Хула тума хӑрас мар.
Вӑл ӗҫ ђасах пулас ҫук,
Епӗр ӑна курас ҫук.
69 Кашкӑрсенђен хӑрасан
Кайас пулмас̆ вӑрмана,
Ҫлене ваклас турттарас
Тарӑн вара ҫырмана.
70 Тӑпра витес ҫийалтан
Шӑрши-марши ан тухтӑр,
Ђасрах ҫӗрсе ҫӗр пултӑр,

Ун выранне çын тултăр.
71 Христос Турă çынсенђен
Тĕрĕксем пит хăрĕçĕ
Çĕлен пекех ђĕтресе
Сехĕрленсе тăрĕçĕ
72 Тем ђулђ усă кўреççĕ
Ку ватсенĕн сăмахсем;
Вĕсем йуратса калаçнă
Тĕрлĕ-мĕрлĕ йумахсем.

---

1 Авал Пўлертен пĕр çын
Iерусалим хулине
Кайаŭ Турра кĕл-тума
Святойсене пуççапма.
2 Iерусалиме çитсессĕн
Ирхине пит васкаса
Пĕтĕм çынран маларах
Кайаŭ ђиркĕве кĕл-тума.
3 Вăл-ђиркĕве çитсенех
Пырса çитет пĕр ват-çын
Шур сухаллă шур çўçлĕ,
Пĕр ђарăнса тăмасăр,
Çынна сăмах хушмасăр,

Кĕрсе кайаť ђиркĕве
Çакă çынран маларах.
4 Ват çын кĕрсе кайсассăн
Урăх çынсем те нумай
Кĕрсе тулаççĕ ђиркĕве
Çапса хĕстернĕ пекех.
5 Пăхаť, пăхаť çакă çын
Ватă çынна ђиркӳре
Анђах нимпе кураймасť
Тем пек хытă пăхсан та.
6 Тухнă ђух та пăхкалаť
Пурĕ-пĕрех кураймасť
Пит тĕлĕнет çакă çын
Ку кам пулђĕ-ши? тесе.
7 Тепĕр кун ирхине татах
Çакă çын пит васкаса
Пур çынсенђен маларах
Кайаť Турра кĕл-тума.
8 Ђиркӳ патне çитсенех
Хай ватă çын кайаллах
Çакă çынран маларах
Кĕрсе кайаť ђиркĕве.
9 Палланă пек туйăнаť
Çакă çынна çав ват çын

Анђах сăмах хушаймаст̆
Пит васкаса кĕнипе,
10 Куçран çухатас маршăн
Çакă çын та васкаса
Ватă çыннăн хыçĕнђен
Кĕрсе кайат̆ ђиркĕве.
11 Анђах йепле пăхсан та
Каллех куçран çухатат̆
Клĕрен тухнă ђуне-те
Татах курайmаст̆ ват çынна.
12 Çакă çын питĕ ўкĕнет
Пĕр те калаçайманшăн:
Ăма епĕ калаçма
Тивĕçлĕ мар-ши? тет, унпа.
13 Виççĕмĕш кунне татах
Çак çын пур çынран малтан
Ђиркў алăкĕ умне
Кайса тăрат̆ васкаса
Ватă çынна курасшăн.
14 Татах хайхи ватă çын
Пур çынсенђен те малтан
Кисе çитет ђиркĕве
Кĕрсе кайма тытăнат̆.
15 Çакă çын лайăх паллат̆

Хӑйсен Пӳлер ҫыннине,
Ватӑ Валём-Хуҫана,
Питӗ хытӑ тӗлӗнет,
Умне ӳксе пуҫҫапать,
Ҫапла сӑмахсем калать:
16 „Манран Пӳлерте йултӑн,
Хӑҫан килтӗн ес кунта,
Ырӑ ҫыннӑм, ыр хуҫам?
Кӗлле кӗнӗ ҫух курап
Кӗрсессӗнех ҫухатап.
17 Тухнӑ ҫух та кураймастӑп
Темӗн тӗрлӗ пӑхсан та
Епӗ питӗ тӗлӗнетӗп,
Турӑ хваҫе пур санра“.
18 Ват ҫын каллех васкаса
Кӗрсе кайать ҫиркӗве.
Вӑл ҫиркӗве кӗрсенех
Пӗтӗм ҫиркӳ ӑш ҫутӑлать
Хӑй ку тритӗнҫе те
Ҫын куҫӗнҫен ҫухалат.
19 Кӗлӗ пӗтсен ватӑ ҫын
Ҫиркӳ алӑк умӗнҫе
Ҫакӑ ҫынна курӑнса
Ҫапла сӑмахсем калать:

20 „Еп çын триҫҫен кисе çитеп“,
Çын выртиҫҫен таврӑнап,
Мана кунта никам та
Кураймасӗ ку ҫиркӳре.
21 Халӗ Турӑ хушнипе
Сана анҫах курӑнтӑм,
Ку тӗнҫери пурнӑҫа
Турӑ хушнӑ пек пурӑнтӑм.
22 Пӗтӗм ӗмӗр тӑршшӗне
Пӗр усал ӗç тумарӑм,
Çамрӑк ҫухне вӗрентӗм,
Пӗр те ахаль тӑмарӑм.
23 Çамрӑк ҫухне вӗрентӗм
Вӑй кӗрсессӗн ӗçлерӗм;
Ватӑлсассӑн кӗл-турӑм,
Турӑ патне çул турӑм.
24 Ыр кӑмӑлӑмшӑн савса
Турӑ мана пиллерӗ,
Лар ман çийа хӑвӑртрах
Исе кайап Пӳлере.
25 Ват çын çине ларат çын
Вӑл хушнине итлесе,
Сисмесӗрех йулат çын
Хӑйсем Пӳлере çитнине.

26 Пĕр куç уççа хупиҗҗен
Кисе çитеççĕ Пӳлере,
Унтан ват çын калат ăна
Акă çапла сăмăхсем:
27 „Ыр кăмăлпа ыр ĕçĕмшĕн
Турă мана йуратрĕ;
Йатă ĕмĕр тăтăр тесе
Çак Пӳлерте çуратрĕ.
28 Çакă Пӳлĕр тăвĕ çинҗе
Йатăм ĕмĕрех тăрĕ,
Мана пытарнă вырăна
Нумай çын кисе курĕ.
29 Епĕ пуснă вырăнсана
Турра кĕл-тăвĕç ларса,
Еп пурăнăп Турă панҗе
Усал-тĕçеле җарса.
30 Нумай Ырă сăмахсем
Калаçрăм еп санпала.
Çак Пӳлер ту савăнĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр манпала“.